КПРФ

# Чăнлăх

КПРФ Чăваш рескомĕн хаçачĕ № 1 (37) 2019 çулхи раштаван 25-мĕшĕ

«Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ

## Кризисран тухмалли çул – социализм!

***Раштав уйăхĕ – ĕç-хĕле пĕтĕмлетмелли вăхăт. Нумаях пулмасть иртнĕ пресс-конференцире КПРФ Тĕп Комитечĕн Председателĕ Г.А. Зюганов палăртнă тăрăх, эпир пурте çĕршыва тикĕссĕн аталантарассишĕн, президент чи вăйлă аталаннă пилĕк патшалăх шутне кĕме чĕнсе каланине пурнăçлассишĕн, чухăнлăха çĕнтерессишĕн тата çĕнĕ технологисене ĕçе кĕртессишĕн тăрăшатпăр. «Анчах ку енĕпе, – палăртрĕ КПРФ лидерĕ, – пирĕн пысăк йывăрлăхсем пур, мĕншĕн тесен правительство палăртнă тĕллевсене пурнăçлаймасть. Ўсĕм пĕр процентран иртеймест. Тепĕр çулталаск çухатсан президент чĕнсе каланине пурнăçа кĕртесси те пумасть, социаллă-экономика лару-тăрăвĕ те хăвăрт каткăсланĕ».***

Геннадий Андреевич цифрăсене те асăнчĕ. Анчахрах «Регнум» агентство социологи ыйтăмĕ ирттернĕ, унта 86 пин çын хутшăннă. Граждансен 93 процентĕ патшалăх политикин курсне улăштарасшăн, хальхи вăхăтри лару-тăрупа кăмăлсăр. Вĕсем пурнăçа социализацилеме, социаллă гарантисемпе тивĕçтерме ыйтаççĕ. Питĕ нумайăшĕ социализмăн паха енĕсем патне таврăнасшăн. Ыйтăма хутшăннисен 72 процентĕ влаç тата общество интересĕсем пĕр килменни çинчен пĕлтернĕ. Регионсенчи лару-тăру пирки калас тăк, влаçшăн чи лайăх кăтарту – кăмăлсăррисен 62 процентĕ. Пĕтĕмпе вара – 82 процента яхăн, çакă революци умĕнхи лару-тăру пулнине кăтартать. «Е патшалăх курсне улăштарăр, хăвăрăн правительствăна салатса ярăр, е лару-тăру каткăсланса кăна пырĕ!» – асăрхаттарнă Геннадий Андреевич.

Пĕчĕк тата вăтам бизнеса пăхас тăк, Г.А. Зюганов каланă тăрăх, иртнĕ çулта 290 пин предприяти уçăлнă, 622 пинĕшĕ хупăннă. Кăçал пĕчĕк тата вăтам бизнес юхăнас юхăм малалла пырать. Çав вăхăтрах официаллă кăтартусемпе 19 миллиона яхăн çын чухăнлăх чиккинче тăрать.

Пĕр вăхăтрах, КПРФ лидерĕ палăртнă тăрăх, тулаш политика лару-тăрăвĕ те япăхать. «Çавна шута илсе, – тенĕ Геннадий Андреевич, – эпир «Лайăх пурнăç патне 10 утăм» программа, 12 саккун тата 33 трлн. тенкĕлĕх аталану бюджетне сĕнтĕмĕр. Эпир иккĕленместпĕр, йывăрлăхран тухмалли çул вăл – социализм». Сăмах май, паян ирĕклĕ 120 трлн. тенкĕ укçана «шăнтса лартнă», вăл граждансемшĕн те, экономикăшăн та ĕçлемест. «Эпир влаç пирĕн сĕнӳсене шута илессе шанăччĕ, – тенĕ коммунистсен лидерĕ. – анчах та ун вырăнне кивĕ характеристикăллă бюджетах сĕтĕрсе пыраççĕ.

Вĕçĕ 2-мĕш стр.

## Шупашкарта И.В. Сталин палăкне уçрĕç














***Раштавăн 21-мĕшĕнче И.В. Сталин çуралнăранпа 140 çул çитнĕ май Иосиф Виссарионовичăн барельефĕ уçăлчĕ. Ăна КПРФ Чăваш рескомĕн çурчĕ çине вырнаçтарчĕç. Ку – Совет Союзĕн генералиссимусĕн, парти тата патшалăх деятелĕн Чăваш Ен тĕп хулинчи пĕрремĕш палăкĕ.***

Монументлă композици авторĕсем – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕсем Л.Я. Тихонов тата В.А. Зотиков скульпторсем. Сталин пуçне бронзăран шăратса кăларнă, ялава – пăхăртан. Чул постамент çине И.В. Сталинăн «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн» медаль çинчен илнĕ сăмахĕсене «Пирĕн ĕç тĕрĕс – эпир çĕнтертĕмĕр» касса кăларнă.

Палăка уçма йĕркеленĕ савăнăçлă уява КПРФ Чăваш рескомĕн тата Шупашкар хула комитечĕн членĕсем, партин республика районĕсемпе хулисенчи уйрăмĕсен пĕрремĕш секретарĕсем, коммунистсем, депутатсем, комсомолецсем, КПРФпа пĕр шухăшлă общество организацийĕсен – «Вăрçă ачисем», «Совет офицерĕсен союзĕ», «Раççей шанăçĕ», РУСО – представителĕсем, хула çыннисем хутшăнчĕç.

Мероприятие КПРФ Чăваш рескомĕн секретарĕ А.В. Шурчанов уçрĕ: «Эпир паян хамăран вĕрентекенĕн И.В. Сталинăн çуралнă кунне барельеф уçса паллă тума пухăнтăмăр. Ура, юлташсем!» Пухăннисем туслăн хураврларĕç: «Ура!» СССР гимнĕ янăрарĕ. Унтан КПРФ Чăваш рескомĕн пĕрремĕш секретарьне, КПРФ ЦК Президиумĕн членне, РФ Патшалăх Думин депутатне В.С. ШУРЧАНОВА сăмах пачĕç. «Паян тĕнче И.В Сталин çуралнăранпа 140 çул çитнине паллă тăвать», – терĕ Валентин Сергеевич И.В. Сталинăн Совет Союзне йĕркелес тата çирĕплетес, нимĕç фашисчĕсене çапса аркатас, вăрçă аркатнă халăх хуçалăхне ура çине тăратас, Тăван çĕршывăн ядерлă хӳтĕлхне туса хурас тĕлĕшпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçĕсене аса илнĕ май. Вăл çавăн пекех паян халăхăн 70 процентĕ Сталин тытса пынă политикăна ырланине палăртрĕ. Çакă халăх пирĕн çĕршыва кирлĕ улшăнусене кĕртме – экономика курсне улăштарма – пиçсе çитнине кăтартать. В.С. ШУРЧАНОВ хальхи вăхăтри Раççей тата Чăваш Ен Совет Союзĕн 1990 çулхи аталăнăвĕн шайĕнчен юлса пынине кăтартакан экономика кăтартăвĕсем çинче уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Сăмахне вăл Франци президенчĕн Шарль де Гольăн цитатипе – «Сталин аваллăхра тăрса юлман. Вăл малашлăхра çухалнă» – вĕçлерĕ.

И.В. Сталинăн СССР ертӳçи пулнă чухнехи ĕçĕ-хĕлĕ пирки Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Г.В. Данилов, Регионсен хушшинчи «Совет офицерĕсен союзĕ» общество организацийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн председателĕ Ю.А. Бусов, КПРФ Чăваш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ М.В. Козлов хăйсен шухăшĕсене пĕлтерчĕç.

Барельеф тумалли укçана пĕтĕм тĕнчепе пухнă. Коммунистсем тата вĕсемпе пĕр шухăшлă çынсем палăк фондне кам мĕн чухлĕ пултарнă çавăн чухлĕ хывнă. Шупашкарти 32-мĕш пуçламăш уйрăм секретарĕ С.М. Светлова пĕлĕшĕсем пулăшнипе 14 пине яхăн пуçтарнă.

Мероприятире КПРФăн çĕнĕ тăватă членне парти билечĕсем пачĕç. Партин чи пысăк наградине – «Парти хастарлăхĕ» ордена – Шупашкарти трактор завочĕн ветеранĕ, «Шупашкар чăнлăхĕ» хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ В.В. Николаев тивĕçрĕ. Икĕ скульптора, С.М. Светловăна тата ытти юлташа «И.В. Сталин çуралнăранпа 140 çул çитнине палăртса» медальпе чысларĕç.

Тухса калаçнисен шухăшĕпе – И.В. Сталин барельефĕ Чăваш Республикин тĕп хулине чăннипех те илем кӳрĕ.

**Сергей Шульдяшов.**

## Кризисран тухмалли çул – социализм!

Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.

Çĕнтерӳ кунĕ умĕн те 11 миллион вăрçă ачине пулăшасшăн мар, ялсенче пурăнаканннисен пенсийĕ 7-9 пин тенкĕ, хуларисен 12-14 пин тенкĕ. Пирĕн шухăшпа – çакă питĕ тĕрĕс мар политика!»

«Тĕрĕслĕхе эпир халăх предприятийĕсенче çирĕплетрĕмĕр, çулталăк кăтартăвĕсемпе вĕсем чи лайăххисем пулса тăчĕç, – каласа кăтартрĕ Г.А.Зюганов. – Çавсен шутĕнче Иркутск облаçĕнчи «Усольский свинокомплекс», унти вăтам шалу 108 пин тенкĕ, Мускав облаçĕнчи Ленин ячĕллĕ совхоз, вăтам шалу 90 пин тенкĕ, Европăри чи лайăх ял хуçалăх предприятийĕ пулса тăнă «Звениговский» СПК тата Ставрополь крайĕнчи «Терновский» колхоз. Пурĕ çĕршывра çакăн пеккисем 200 яхăн предприяти».

«Эпир çак хуçалăхсен паха опычĕпе паллаштаракан 10 фильм хатĕрлерĕмĕр, – терĕ Геннадий Андреевич. – Эпĕ вĕсене президента патăм, телеканалсен ертӳçисене ярса патăм. Вĕсене çапла каларăм: «Левченкона тата Иркутск облаçне вăрçса ывăнмарăр-и? Эсир çак область тăватă çулта бюджета 97 миллиардран 212 миллиарда çити ӳстернĕ пĕртен пĕр облаç пулнăран «вĕретĕр». Унччен тӳлесшĕн пулман вăрăсемпе шăпанасем, олигархсем, таса мар ытти вăйсем 100 ытла миллиард тенкĕ тӳленĕ. Халĕ вара çав таса мар вăйсем информаци киллерĕсемпе тата нĕрсĕр кăларăмсемпе усă курса атакăна çĕкленчĕç. Вĕсем вара никама, ниме хиселемесĕр пĕр вĕçĕм саккуна пăсаççĕ. Сюжет кăтартрăр тăк, пире хуравлама май парăр. Анчах эсир никама та хуравлама ирĕк памарăр!»

Раштавăн 14-мĕшĕнче мĕн пур регионта иртнĕ Пĕтĕм Раççей акцийĕ лайăх çирĕплетсе пачĕ: эпир хамăрăн ертӳçĕсене, халăх предприятийĕсене кӳрентерме памастпăр! Рейдерсене Ленин ячĕллĕ совхоза ярса илме памастпăр! Чыссăр судьясене хура ĕçсем тума ирĕк памастпăр!»

«Эпир юлташсенчен тата хамăрпа пĕр шухăшлă çынсенчен пулăшу ыйтрăмăр, хальхи вăхăтра 58 организаци официаллă протестлани çинчен пĕлтерчĕç. Протеста Хăрушсăрлăх Канашĕн мĕн пур членĕ патне ярса панă. Тата эпир Хăрушсăрлăх Канашĕнче хальхи вăхăтри лару-тăрăва пăхса тухма ыйтрăмăр. Мĕншĕн тесен хура ĕçсемпе аппаланакансем Иркутск облаçĕн е Левченкон ят-сумне чакармаççĕ. Грудининăн авторитетне пĕтермеççĕ. Вĕсем çĕршыври тăнăçлăха чакараççĕ тата мĕн пуррине çĕр çумне пусараççĕ», – вĕчĕрхенсе палăртрĕ Геннадий Андреевич.

«Эпир хамăрăн юлташсен интересĕсене тата пĕрлехи ĕçе хӳтĕлĕпĕр. Пире çавăн пек тикĕс тата йĕркеллĕ аталану кăсăклантарать. Çĕршыв тĕп юбилейсене тивĕçлĕ кĕтсе илме пултартăр тесе хамăртан мĕн килнине йăлтах тăвăпăр», – çирĕппĕн палăртрĕ коммунистсен лидерĕ.

**КПРФ Тĕп Комитечĕн пресс-службы.**

## Коммунистсен малашлăх тĕллевĕсем çинчен



***Шупашкарта партин вырăнти уйрăмĕсен пĕрремĕш секретарĕсемпе иртнĕ канашлура парти пурнăçĕн ыйтăвĕсене тата коммунистсен малашнехи тĕллевĕсене сӳтсе явнă.***

КПРФ Чăваш рескомĕн пĕрремĕш секретарĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕ В.С. ШУРЧАНОВ КПРФăн Думăри фракцийĕн ĕçĕ-хĕлĕ, Раççей парламенчĕ 2020 çулхи тата планпа пăхнă 2021 тата 2022 çулсенчи бюджетсемпе ĕçлени, ачасен сывлăхне çирĕплетмелли чи пысăк «Артек», «Орленок», «Смена», «Океан», Мускаври Н.Н. Блохин ячĕллĕ ача-пăча онкологи центрĕ, Ульяновскри Ленин мемориал комплексĕ, «Горки Ленинские» музей-заповедникĕ тата Горкăри Н.К.Крупская ячĕллĕ шкул, Донбасс ачисем час-часах сывлăхне çирĕплетекен «Снегири» комплекс валли укçа-тенкĕ уйăрни çинчен каласа кăтартнă. Çавăн пекех çĕршыври чи ăнăçсăр вунă регион шутне лекнĕ Чăваш Ен федераци бюджетĕнчен 213 пунктпа – ку вăл дотацисем, субсидисем, субвенцисем тата ытти трансфертсем – илессине пĕлтернĕ. Çав вăхăтрах Чăваш Енĕн финансированийĕ питĕ пысăк çăмăллăхлă: центр 99 процент уйăрать, республика – 1 процент. Вăл çавăн пекех федераци бюджетĕнчен Шупашкарти Хĕрлĕ тӳреме реконструкцилеме мĕншĕн сахалрах укçа уйăрма пуçланине те ăнлантарнă.

Малалла докладчик хальхи вăхăтра çивĕч тăракан ыйтăва – пирĕн партие хирĕç пуçарнă информаци вăрçи пирки – сăмах хускатрĕ. «Информаци усăлăхĕнче çирĕпленнĕ лару-тăрăва урăхла ниmĕнле те хаклама çук, – терĕ Валентин Сергеевич. – Мĕншĕн тесен «хĕрлĕ» ертӳçĕсене – Иркутск облаçĕн кĕпĕрнаттăрне С.Г. Левченкона тата Мускав облаçĕнчи Ленин ячĕллĕ совхоз директорне, çĕршыв президенчĕн постне йышăнма тăратакан пирĕн кандидата, тапăнни пирки кăна сăмах пымасть, пĕтĕмĕшле çакă КПРФ ят-сумне варалама пуçарнă ĕç, эпир ăна хирĕçлемесĕр, информаци е урăхла майпа ĕç-хĕл пуçармасăр тăма ниепле те пултараймастпăр».

Юлашки вăхăтра КПРФпа кĕрешмелли тĕп меслет пирĕн кандидатсене суйлава хутшăнма чарни пулса тăчĕ. Сăмахран, Мускав облаçĕнчи Ленин муниципалитет районĕнче, унта коммунистсен командипе пĕрле П.Н. Грудинин суйлава хутшăнать, коммунистсен партийĕн 11 кандидатне сирнĕ. Çакна тĕплĕ шухăшламасăр тата саккунсăр майсемпе тунă. 2020 çулта Чăваш Енре республика пуçлăхне тата вырăнти хăй тытăмлăх управленийĕн органĕсен депутачĕсене, 2021 çулта Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйлаççĕ. «Пирĕн тĕп тĕллевсенчен пĕри мĕн пур суйлав округĕнче хамăрăн кандидатсене тăратасси тата сасăсене тĕрĕс шутлаттарасси пулса тăрать», – палăртрĕ В.С. ШУРЧАНОВ. Çавăнпа та КПРФăн районсемпе хуласенчи комитечĕсен сăнавçăсен «хĕрлĕ корпусне» туса хумалла, вĕсем кашни суйлав округĕнче икĕ-виçĕ çынран сахал мар пулччăр. «Влаç рейтингĕ чакнă, шантарнине пурнăçламан чухне ултава, суяна, администраци вăйне çеç шанма пулать. Пирĕн çапла пулса тухма памалла мар, – тенĕ Валентин Сергеевич. – Пирĕн кун йĕркин лозунгĕ – суйлава хутшăнассишĕн çеç каймалла мар, çĕнтермелле!»

В.И. Ленин çуралнăранпа 150 çул, И.В. Сталин çуралнăранпа 140 çул, Ленинпа Сталин модернизацийĕн хăвачĕпе Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 75 çул çитнине уявлама хатĕрленнине КПРФ совет саманинчи хаклăхсене хӳтĕлеме, антикоммунизмпа, антисоветизмпа, русофобипе кĕрешме пуçарнă кампани пек йышăнать, палăртнă В.С. ШУРЧАНОВ. Çавăн пекех 2020 çулта Чăваш Автономийĕн 100 çулне тата республикăри партипе комсомол организацийĕсен пĕр ĕмĕрхи юбилейĕсене çӳллĕ шайра ирттермелле.

Партин шалти ĕçĕсем пирки каланă май, Валентин Сергеевич Чăваш Енри КПРФ организацийĕсенче отчетпа суйлав кампанийĕсене ăнăçлă ирттернине, вăл 2020 çулхи нарăсăн 29-мĕшĕнче республика конференцийĕпе вĕçленессине, парти ретне çĕнĕ членсене илнине, член взносĕсене пухнине, çавăн пекех парти кăларăмĕсене – «Правда» хаçата тата «Политическое просвещение» журнала, çырăнмаллине палăртнă.

**КПРФ Чăваш рескомĕн пресс-службы.**

*И.В.Сталин çуралнăранпа 140 çул çитнĕ май*

## Сталин ертсе пынипе Совет Союзĕнче мĕн тунă?

***Сталин ертсе пынă тапхăрта, 30 çул хушшинче, Совет Союзĕ аграри, чухăн, чикĕ леш енчи капитала пăхăнса тăнă çĕршывран хăватлă çар тата индустри патшалăхĕ, социализм цивилизацийĕн центрĕ пулса тăнă.***

Патша Раççейĕ вăхăтĕнчи чухăн тата хутла пĕлмен халăх тĕнчери чи аслă тата tарăн пĕлӳллĕ наци çаврăннă. 50-мĕш çулсен пуçламăшĕнче рабочисемпе хресченсен политика тата экономика ăс-хакăлĕн шайĕ çав вăхăтри аталаннă кирек хăш çĕршыври рабочисемпе хресченсен ăс-тăнĕнчен кая пулман çеç мар, иртсе те кайнă. Совет Союзĕнче пурăнакансен йышĕ 41 миллиона çитнĕ.

Сталин вăхăтĕнче 1500 ытла пысăк индустри объекчĕ хута янă, çак шутра ДнепроГЭС, «Уралмаш», ХТЗ, ГАЗ, ЗИС, Магнитогорскри, Челябинскри, Норильскри, Сталинградри заводсем. Çав вăхăтрах демократин юлашки 20 çулĕнче çакăн пысăкăш пĕр предприяти те уçман.

СССРта 1947 çул тĕлне промышленноç потенциалне туллин çĕкленĕ, 1950 çулта унăн хăвачĕ вăрçăчченхи 1940 çулпа танлаштарсан 2 хут ытла ӳснĕ. Вăрçăра шар курнă пĕр çĕршыв та, АПШ енчен пысăк пулăшу пулнă пулин те, ку вăхăт тĕлне вăрçăчченхи шая çĕкленеймен.

Вăрçă хыççăнхи пилĕк çулта апат-çимĕç хакĕсем 2 хут ытла чакнă, çав вăхăтрах чи пуян капитализм çĕршывĕсенче те хаксем ӳснĕ, хăш-пĕр тĕслĕхре 2 е ытларах хут та.

Çакă этемлĕх историйĕнчи чи хăрушă вăрçă пĕтнĕренпе 5 çул кăна иртнĕ, çак вăрçăра пуринчен ытла шар курнă çĕршыв пысăк çитĕнӳсем тунине кăтартать.

Буржуаллă специалистсем 1945 çулта панă прогноз тăрăх – СССР хуçалăхĕ ют çĕршывсенчен кивçен илсен çеç 1965 çулта тин 1940 çулхи шая тухма пултарнă. Эпир вара тулашри пулăшусăрах çав шая 1949 çулта çитме пултартăмăр.

СССР 1947 çулта пирĕн планета çинчи вăрçă хыççăнхи патшалăхсенчен чи малтан карточка системине пăрахăçланă. 1948 çултан пуçласа 1954 çулччен кашни çул апат-çимĕç тата халăх анлă усă куракан таварсен хакне чакарса пынă. 1950 çулта ачасем вилесси 1940 çултипе танлаштарсан икĕ хут ытла чакнă. Тухтăрсен шучĕ 1,5 хут ӳснĕ. Наука учрежденийĕсен шучĕ 40 процент нумайланнă. Вузсен студенчĕсем 50 процент нумайланнă.

Лавккасенче промышленноç тата апат-çимĕç таварĕсем йăтăнса тăнă, дефицит ăнлав пулман. Гастрономсенче тавар хальхи вăхăтри супермаркетсенчен те ытларах пулнă. Паян совет саманинчине аса илтерекен кăлпассие Финляндире кăна тутанса пăхма пулать. Крабсене Совет Союзĕнчи кашни лавккара сутнă. Хамăр çĕршывра туса кăларнă промышленноç таварĕсемпе апат-çимĕç продукчĕсен пахалăхне хальхи вăхăтри «ширпотребпа» танлаштараймăн. Модăри çĕнĕлĕхсене сăнасах тăнă, вĕсем икĕ-виçĕ уйăхранах сентресем çине çитнĕ.

Рабочисен шалăвĕ 1953 çулта 800-3000 е ытларах тенкĕ пулнă. Шахтерсемпе металлургсем 8000 тенкĕ илнĕ. Çамрăк инженерсем – 1300 тенкĕне яхăн. КПСС райкомĕн секретарĕ 1500 тенкĕ илнĕ, профессорсемпе академиксен шалăвĕ чылай чухне 10000 тенкĕрен те иртнĕ.

«Москвич» автомобиль 9000 тенкĕ, шурă çăкăр /1 кг./ – 3 тенкĕ, хура çăкăр /1 кг./ – 1 тенкĕ, ĕне какайĕ – 12,5 тенкĕ, шăла пулă – 8,3 тенкĕ, сĕт /1 л./ – 2,2 тенкĕ, çĕр улми – 0,45 тенкĕ, «Жигулевское» сăра – 2,9 тенкĕ, çитсă пусма /1 м/ 6,1 тенкĕ тăнă. Столовăйĕнчи комплекслă апат хакĕ – 2 тенкĕ. Ресторанта иккĕн апатланма тата пĕр кĕленче пылак эрех илме 25 тенкĕ çитнĕ.

5,5 миллионлă, чи çĕнĕ йышши хĕç-пăшалпа вăйлантарнă, тĕнчери чи лайăх çара тытса тăнине пăхмасăр çак ырлăха тата пуян пурнăçа тума май килнĕ!

Вĕçĕ 3-мĕш стр.

# Сталин ертсе пынипе Совет Союзĕнче мĕн тунă?

Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 2-мĕш стр.

1946 çулта СССР атом хĕç-пăшалĕпе, энергетикăпа, ракета техникипе, технологи процесĕсене автоматизацилессипе, чи çĕнĕ шутлав техникине тата электроникăна ĕçе кĕртессипе, космоса вĕçессипе, çĕршыва газификацилессипе, йăла техникине туса кăларассипе ĕçлеме пуçланă.

Тĕнчери пĕрремĕш атом электростанцине Совет Союзĕнче Аслă Британирен – пĕр çул, АПШран икĕ çул маларах хута янă. СССРта кăна атом пăрçĕмренĕсене тунă.

Çапла вара, СССРта пĕрремĕш пилĕк çуллăхра, 1946 – 1950 çулсенче, тĕнчери чи пуян капитализм патшалăхĕпе сиксе тухнă çар-политика хирĕç-тăрăвне пăхмасăр, кирек епле тулашри пулăшусăр виçĕ социаллă-экономика ыйтăвне татса панă: халăх хуçалăхне ура çине тăратнă; халăх пурнăçĕн шайне çĕкленĕ; экономика малашлăхне анлă çул хывнă.



Халĕ те эпир Сталин еткерлĕхĕн шутĕнчен пурăнатпăр. Ăслăлăхра, промышленноçра – тĕпрен илсен, пурнăçăн кирек хăш сферинче те.

1953 çулхи NarionalBusiness журналта пичетленнĕ Герберт Гаррисăн «Русские догоняют нас» статйинче СССР экономика хăвачĕн ўсĕмĕпе кирек хăш çĕршывран та малта пынине, СССРти ўсĕм АПШринчен 2-3 хут пысăкраххине палăртнă.

1991 çулта совет-америка симпозиумĕнче пирĕн «демократсем» «Японин экономика тĕлĕнтермĕшĕ» пирки чĕвĕлтетме пуçласан Японин миллиардерĕ Хероси Теравама лайăх «питрен çатлаттарчĕ»: «Эсир чи пĕлтерĕшли – тĕнчери тĕп роль – пирки каламастăр. Пирĕн экономика системи тĕппипех тенĕ пек сирĕнтен ўкерсе илнĕскер. Уйрăмлăхĕ пирĕн капитализм, уйрăм производительсем пулнине кăна. Тата эпир нихăçан та 15 процент ытла ўсĕм туман, эсир вара производство хатĕрĕсен обшество пурлăхĕпе 30 процентран та иртнĕ. Пирĕн мĕн пур фирмăра сирĕн Сталин вăхăтĕнчи лозунгсем çакăнса тăраççĕ».

Нихăçан та пирĕн çĕршыв Сталин ĕмĕрĕнчи пек мăнаçлă çĕнĕлĕхсене курман! Пĕтĕм тĕнче пирĕн çитĕнўсене тĕлĕнсе сăнанă! Çавăнпа паян «шуйттанла» тĕллев пурнăçа кĕрет: тарăн ăс-тăнĕпе, йĕркелўçĕ пултарулăхĕпе, çирĕп кăмăлĕпе, стратегиллĕ шухăшлавĕпе, патриотлăхĕпе пĕтĕм пурнăçне халăха халалланă Иосиф Виссарионович Сталинпа /паян Раççейре Г.А. Зюганов кăна çак пахалăхсене тивĕçтерет, çавăнпах русофобсен тата антисоветчиксен пропаганда машини çирĕм çул ытла КПРФ лидерне хирĕç ĕçлет/ танлашма пултаракан çынсене нихăçан та патшалăх влаçне памалла мар.

Анчах та чĕрĕк ĕмĕре тăсăлнă пропаганда унăн йĕркелўçисене вилĕ Сталина çĕнтерме пулăшаймарĕ.

Эпир Сталина элеклекенсен тĕллевĕсене аван пĕлетпĕр. Вĕсем эпир иртнине хальхипе танлаштарса паян мĕн пулнине ăнланса илесрен хăраса çак тасамарлăха пирĕн çине тăкаççĕ. Шухăшпа та пулин социализм идейисем патне ан таврăнччăр тесе тăрăшаççĕ! Сталина хирĕçле кампанин пĕр тĕллев – халăха Сталин вăхăтĕнчи экономика системине, вăл пирĕн çĕршыва кĕске хушăрах хăватлă тата ирĕклĕ патшалăх туса хума май пачĕ, чĕртсе тăратма чарасси.

**Раштав, 30: СССР йĕркеленнĕ кун**

# Совет Союзĕн феноменĕ

***Социализмлă Совет Республикисен Союзĕ – çĕнĕ вăхăтри историн хăйне евĕрлĕ пулăмĕ, унăн аталанăвĕ, тĕллевĕ этемлĕх революципе капитализмран социализма куçнипе çыхăннă.***

СССР – 1917 çулта Аслă Октябрь социализм революцине çĕнтерўпе çирĕплетнĕ, тĕнче историйĕнче чи малтан социализм обществине туса хунă патшалăх. Çакă общество прогресĕн чи çўлти карчĕ пулса тăчĕ. Аслă Октябрь тĕнчери е пысăк калăпăшлă социализм революцине старт пачĕ, Советсен çĕршывĕ революци мелĕпе капитализмран социализма куçакан этемлĕх ертўçи, социализм çĕнелĕвĕн пуçаруçи, тĕнчен тĕп пайĕ пулса тăчĕ.

1922 çулта СССР халăхсен тата социализм строительствин патшалăхĕсен федерацийĕсен патшалăх союзĕ пек йĕркеленни тĕнче историйĕнче феномен шутланать. СССР çураличчен тĕнче историйĕ нацисемпе халăхсем хăйсен ирĕкĕпе пĕр патшалăха пĕрлешни пулман. Çакă йăлтах Аслă Октябрь социализм революцийĕ çĕнтернинчен килнĕ. Вăл Раççей халăхĕсене капитализм пусмăрĕнчен тата çынна çын пусахланинчен хăтарнă, вĕсене малалла аталанма çул уçса панă. Çавăнпа Совет Союзĕ пĕтни тĕнчене пысăк хурлăх кўчĕ.

Совет Союзĕн феноменĕн пĕлтерĕшĕ çакăнта: пĕрремĕш хут тĕнче историйĕн юхăмĕнче Çĕр чăмăрĕ çинчи чи пысăк тата чи пуян çĕршыври общество пурнăçĕ ăслăлăх çинче никĕсленнĕ. СССРти социализм обществине тумалли ăслăлăх программине В.И.Ленин хатĕрленĕ. Вăл общество пурнăçĕн объективлă тĕп саккунĕнчен, производство хутшăнăвĕсен шайне производство вăйĕсен аталанăвĕпе шайлаштарма ыйтаканскертен, тухнăскер. Вăл общество аталанăвĕн саккунĕсемпе социализм строительствин конкретлă чăнлăхĕнче, çав вăхăтрах совет обществин 20 ĕмĕрти пурнăç условийĕсене шута илсе усă курма палăртнă социализмăн ăслăлăх теорине пĕрлештерсе тăрать. Çак программа социализмăн ăслăлăх теорине тата уйрăм Советсен çĕршывĕнчи социализм строительствин общество практикине çыхăнтараканскер.

Тĕнче историйĕнче пуçласа 1930 çулсенче СССРта пуçламăш социализм туса хунă. Унта общество производствин тĕллевĕ ĕç çыннин пурлăх, социаллă, культура ыйтăвĕсене тивĕçтересси шутланнă, çын пурнăçĕн çĕнĕ экономика никĕсĕ – производство укçи-тенки çинчи общество харпăрлăхĕ – çирĕпленнĕ. Çавна май çын тата общество социаллă пусмăртан тата класс антагонизмĕнчен хăтăлнă, ĕç çыннисен мĕн пур класĕн тата сийĕн социаллă пĕр танлăхĕ çирĕпленнĕ, социализм цивилизацийĕ тата культури йĕркеленнĕ. Общество хутшăнăвĕсен социаллă системинче пурнăç йĕркине тата менталитетне коллективизм тата гуманизм принципĕсем çинче тытса пыракан этемлĕх обществи туса хунă. Пĕтĕмĕшле çакă 20 ĕмĕрти этемлĕх историйĕнчи чи пысăк çитĕнў шутланнă.

Советсен çĕршывĕнче производство аталанăвне палăрмаллах вăйлатнă, наукăна тата культурăна, халăх пурнăçĕн пахалăхне тата шайне çĕкленĕ. Анчах та совет обществин пурнăçĕнче социаллă тĕрĕсмарлăх, уйрăм харпăрлăх йăли-йĕрки, патшалăх бюрократийĕ, буржуаллă идеологи, хапсăнчăклăх, çавăн пекех капитализмăн ытти паллисем палăрнă. Буржуаллă пĕтĕм çак еткерлĕх капиталзм шайĕнчи пурлăхпа производство никĕсĕпе – çĕршыври социализм индустрийĕ вăхăтĕнче çĕкленнĕ пысăк машина промышленноçĕпе, сăлтавланнă. Кунсăр пуçне совет обществи капитализм лагерĕпе юнашар аталаннăран империализм киревсĕрлĕхĕсене, тĕнче шайĕнчи класс кĕрешĕвĕн витĕмне туйса тăнă. Тĕнчери капитализм системи социализм обществине çĕклеме тата аталанма тĕрлĕ майпа чарса пынă. Этемлĕх революцине туса капитализмран социализма куçни йĕркеллĕ пулăм пулнă пулин те империализм контрреволюцийĕ совет социализмĕн юхăмне Çĕр çинчи цивилизацин чи çўллĕ шайне çĕклеме вăйлах чăрмантарнă.

Аслă Октябрь тĕнче историйĕн юхăмне нумай енлĕ витĕм кўни 20 ĕмĕр варринче обществăн производство вăйĕсен аталанăвĕнче революци – тĕнчери ăслăлăх-техника революцине – пуçарма хистенĕ. Вăл этемлĕхĕн производство вăйĕсене пĕтĕмĕшле аталанăвăн чи çўллĕ шайне çитернĕ. Ăслăлăха тата пурлăх производствине çыхăнтарни производствăн ăслăлăх çинче никĕсленнĕ тĕсне туса хума пулăшнă, çавăнпа индустри производствин хăвачне нумай хутчен ўстернĕ. Çапла майпа ăслăлăх-техника революцийĕ тĕнче калăпăшлă производствăн коммунизм меслечĕн пурлăхпа техника никĕсне туса хумалли мелсене, Çĕр çинчи мĕн пур халăхăн ыйтăвне тивĕçтерме май паракан производствăна тата автоматизацине аталантарассине шантаракан çул-йĕре палăртнă.

Ăслăлăх обществăн производство вăйне çаврăнни пĕтĕм тĕнчери пурлăх производствине туса хума май панă. Анчах производствăна глобализацилени производство укçи-тенки çинчи уйрăм харпăрлăхпа тата планета çинчи чылай çĕршыври производство хутшăнăвĕсен капитализм системипе хирĕçĕве кĕнĕ. Çавăнпа пĕр çĕршыв та тĕнчери ăслăлăх-техника революцийĕн çитĕнĕвсене кирлĕ чухлĕ алла илеймен, хăйĕн экономикине наука производстви çинчен пурлăх никĕсĕ çине куçарайман. Çавна май юлса пынăран 1970 çулсенче тĕнчере экономика кризисĕ алхасма пуçланă, кĕçех вăл питĕ хăвăрт вăйланса кайнă, тĕнчери мĕн пур çĕршыва тата общество пурнăçĕн мĕн пур сферине ярса илнĕ. Этемлĕх историйĕн прогресĕн лидерĕ те – Совет Союзĕ – глобаллă кризис авăрне лекнĕ. Çав вăхăтра совет социализмĕ В.И.Ленинăн социализм ăслăлăхĕн проекчĕ ыйтнă – «буржуази çĕнĕрен пуç çĕклеме тата пурăнма пултарайман условисем» туса хурасси /В.И.Ленин. Çырнисен тулли пуххи, 36 т., 175 с./ е «капитализмран çўлерех тăракан общество йĕркине туса хурасси, тĕрĕсрех: ĕç тухăçлăхне ўстересси» /Çавăнтах, 187 с./ – шая çĕкленеймен пулнă-ха.

Глобаллă кризис тĕнчери капитализм системине пĕтерет, уйрăм харпăрлăх цивилизацийĕн историне вĕçлет. Тĕнчери ăслăлăх-техника революцийĕн юхăмĕнче общество производствин капитализм меслечĕн конструктивлă хăвачĕсем чакнă, çавна май тĕппипех пĕтнĕ. Производство укçи-тенки çинчи уйрăм харпăрлăх производство хутшăнăвĕсен капитализм системине йĕркелемелли никĕс пулма пăрахнă çеç мар, общество производствине аркатакан та пулса тăнă. Юлашкинчен тĕнчери капитализм системи хаярланса çитнĕ, глобаллă кризис революци туйăмĕсене вăйлатнă.

Империализм агонийĕ унăн хаярлăхне ўстернĕ кăна. 1980 çулсенче империализм этемлĕх историйĕн прогресĕнчи мĕн пур пулăма хирĕç антикоммунизм хирĕç-тăрăвне пуçарнă, унăн тĕллевĕ – тĕнчери социализм системине пĕтересси тата Çĕр чăмăрĕ çинче капитализм обществине пуç пулма майсем туса парасси. Империализмăн тĕп тăшманĕ антигонизм хирĕç-тăрăвĕсем шалтан аркатакан Совет Союзĕ пулса тăнă. Социализмла Тăван çĕршыва хўтĕлеме коммунистсен юхăмĕн Марксизм-Ленинизм чăмăрĕ империализм агрессине хирĕç ăс-тăн фрончĕпе çĕкленнĕ. СССРа аркатма пуçланă «ăс-тăн вăрçинче» империализм коммунистсене хирĕçле вăйĕсем 1991 çулта виçерен тухса кайса хăйне шурлăха кĕртсе ўкернĕ, çавна май унăн ирĕксĕрех пĕтмелле. Общество аталанăвĕн саккунĕсене хирĕç пырса империализм контрреволюцийĕ хăйне хăй пĕтермелли çулпа пырать. Этемлĕх историйĕн малашнехи аталанăвĕн стратеги пуçарăвĕ совет халăхĕн Марксизм-Ленинизм вăйĕсенче упранать. Империализмăн коммунистсене хирĕç пуçарнă хаярлăхĕ наци харпăрлăхне – халăхăн наци пуянлăхне тата планетăн çут çанталăк ресурсĕсене – вăрланине пытармалли меслет пулса тăчĕ.

СССР арканни пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ. Чи малтанах тĕнче шайĕнче класс вăйĕсен шайлашăвĕ арканчĕ. Кун хыççăн общество аталанăвĕн килĕшўлĕхĕ арканчĕ, тĕнчери экономика тата политика тытăмĕ йĕркерен тухрĕ, тĕнче историйĕн процесĕн тăнăçлăхĕ çухалчĕ. Çĕр чăмăрне пайласси пуçланчĕ, тĕнчери çивĕчлĕхсемпе хирĕç-тăрусем вăйланчĕç, этемлĕх умĕнчи хăрушлăх нумайланчĕ. Пĕтĕмĕшле планета çинче арăш-пирĕш хуçаланма пуçларĕ, тĕнче обществин ĕлĕкхи тытăмĕ арканасси хăвăртланчĕ. Çаксене планета çинчи «чи çўлте» тăракан вăйсем йĕркелесе тăма пултараймаççĕ, çавна май çакă пĕтĕмпех революци тухас умĕнхи лару-тăрупа пĕрешкел.

Революцин глобаллă кризисĕ, пĕтĕм тĕнчери революци умĕнхи лару-тăру, капитализм системин вĕчĕрхенĕвĕ, империализм контрреволюцийĕ вăйланни тата çакăн евĕрлĕ юхăмсем пурри Çĕр чăмăрĕ çинче социализм революцийĕн палăрăмĕсем вăй илме пуçланине кăтартаççĕ. Социаллă взрыв эпицентрне темиçе пая пайланă Совет Союзĕ лекнĕ: Прибалтика тата Молдови халăхĕсем хăйсене хăйсем çухатас çул çине тăнă, Украина хăйне хăварт пĕтермелли çулпа пырать, Кавказ, Казахстан, Вăтам Ази халăхĕсем империализм чуралăхне кĕрсе ўкрĕç. Çак паллăсем нумай миллион çынлă Раççее пĕтерекеннисем пулчĕç. Юлашкинчен совет халăхĕн геноцичĕ туллин вăй илчĕ.

Вĕçĕ 4-мĕш стр.

Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 3-мĕш стр.

# Совет Союзĕн феноменĕ

Çав вăхăтрах совет халăхĕн Марксизм-Ленинизм вăйĕсенче этемлĕх историйĕн малашнехи прогресĕн социаллă пуçарăвĕсем вăй илсе пыраççĕ. Вăл социализма сума сăвакан халăхсемпе çĕршывсене пĕрлештерме пултаракан çĕнĕ Союз туса хурассишĕн тăрăшать. Тĕнче историйĕн объективлă логикипе килĕшӳллĕн глобаллă социализм революцийĕн миссийĕ планета çинче социализм çĕнтерĕвне çирĕплетесси пулать. Уйрăм харпăрлăха пĕтерни тата производство укçи-тенки çинче общество пурлăхне йĕркелесе глобаллă социализм революцийĕ обществăна социаллă танмарлăхран тата антагонизмран хăтарать, пур çынна та социаллă пĕртанлăхпа тивĕçтерет. Çав вăхăтрах социализм революцийĕ обществăна хăй еккипе аталанасран сыхлĕ, унăн пурнăçне наука çинче никĕслĕ тата унăн аталану çулне наука тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырĕ. Юлашкинчен этем социаллă пусмăртан тата хăйне хисепсĕр усă курнинчен çеç мар, çут çанталăк тата общество саккунĕсен пусмăрĕнчен те ирĕкленĕ.

Этемлĕх революципе капитализмран социализма куçассине вĕçленĕ май пĕтĕм тĕнчери социализм революцийĕ коллективизм тата гуманизм аталанăвĕн чи çӳллĕ, Çĕр çинчи цивилизацин коммунизм картлашки патне çул уçать. Çак истори процессне наука тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пыни тĕнче историйĕнчи социализм революцийĕн çĕнтерĕвне çирĕплетнĕ социализмлă союз патшалăхне тивĕçтерме кирлĕ, унăн тĕллевĕ – çын социаллă чи паха япала пулса тăракан этемлĕх обществине туса хурасси. Совет Союзĕ çав социализмла союз патшалăхĕн, социализм демократийĕн тата интернационал пĕрлĕхĕн наука хăй тытăмлăх управленийĕн паллисене пĕрлештерекен пулса тăмалла пулнă. Çакă чи малтанах Ленин социализм проектне пурнăçланипе çыхăннă.

К.Маркс этемлĕх историйĕн аталанăвĕн политика стратегине хатĕрленĕ чухне ыйту лартнă: «коммунизм обществинче патшалăх мĕне çаврăнма пултарĕ?» /К.Маркс, Ф.Энгельс. Çырнисем, 2-мĕш кăларăм, 19 т., 27 с./. В.И.Ленин çак ыйтăва хуравласа çапла çырнă: «Тĕнчери /Европăри мар/ Пĕрлештернĕ Штатсем эпир социализмпа çыхăнтаракан патшалăх пĕрлешĕвĕн мелĕсем тата нацисен ирĕклĕхĕсем пулса тăраççĕ» /В.И.Ленин, Çырнисен тулли пуххи, 26 т., 354 с./. Социализм никĕсĕ çинче пĕтĕм тĕнчери пурлăх производствине пĕрлештерни тăванла халăхсен союзла патшалăхĕсен экономика никĕсĕ шутланать, Совет Союзĕ унăн пĕрремĕш тĕслĕхĕ пулса тăрать.

**Юозас Ермалавичюс**, истори наукисен докторĕ, профессор.

Парти ĕçĕ-хĕлĕ

# Пур çĕрте те тивĕçлисем кирлĕ

**КПРФ Чăваш республикăри комитечĕн партактивĕн канашлăвĕсенче Шупашкар районĕн уйрăмне ялан чи лайăххисен шутĕнче палăртаççĕ. Редакци КПРФ Шупашкар райкомĕн пĕрремĕш секретарьне М.В. Козлова парти ĕçне мĕнле йĕркелени çинчен каласа кăтартма сĕнчĕ.**



Пуçламăш 20 организацире 135 коммунист шутланать. Вĕсем районти мĕн пур 17 ял тăрăхĕнче йĕркеленнĕ. Лапсар, Чăрăшкасси, Янăш ял тăрăхĕсенче – икшер те. 172 ялтан 35-шĕнче кăна хальлĕхе парторганизаторсем çук. «Ку енĕпе ĕçлемелле», – тет М.В. Козлов.

КПРФ Уставĕпе килĕшӳллĕн райкомра час-часах бюро ларăвĕсем тата пленумсем иртеççĕ. Çавăн пекех Ишекре пуху ирттересси йăлана кĕнĕ, унта Тăрăн, Чăрăшкасси, Ишлей, Мăнал парти уйрăмĕсенчи коммунистсем хутшăнаççĕ. Пуçламăш организацисен пур секретарĕ те бюро ларăвĕсенче парти ретне çирĕплетес, парти взносĕсене пухас, депутат пулма кандидатсене палăртас, парти кăларăмĕсене çырăнассине йĕркелес тĕлĕшпе, ытти ыйтусемпе тăвакан ĕçсем çинчен каласа кăтартаççĕ. «Лайăх опытсене анлăрах сарма выранти депутатсен отчечĕсене те итлетпĕр», – терĕ М.В. Козлов. Суйлавçăсен наказĕсемпе ĕçлени çинчен И.Ф. Филиппов /Лапсар/, В.Т. Лысова /Шорчекасси/, В.И. Сергеев тата И.В. Степанов /Чăрăшкасси/ каласа пачĕç.

«Уйрăмах хастаррисен йышĕнче пирĕн – пысăкрах пуçламăш организацисем. Тĕслĕхрен, Кӳкеçри пуçламăш уйрăм секретарĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ А.М. Андреев хăй тавра çамрăксене пуçтарма пултарнă. Вĕсем член взносĕсене те лайăх пухаççĕ – партин кашни членĕ пуçне вăтамран 151,32 тенкĕ. Чăрăшкассинчи уйрăмра /секретарĕ Г.П. Петров/ 20 коммунист учетра тăрать, бюро хастар ĕçлет. Взноссене те аван пухаççĕ – 99,25 тенкĕ. Протест акцийĕсене йĕркелессипе Атайкасси уйрăмне /секретарĕ А.П. Смирнов, райком бюровĕн членĕ/ çитекенни çук, – пĕлтерчĕ Михаил Васильевич. – Çавăн пекех хастар юлташсене палăртса хăварас килет, пирĕн тĕрлĕ енлĕ ĕç шăпах вĕсем çинче тытăнса тăрать. Акă Тăрăнри пуçламăш уйрăм секретарĕ А.З. Ефимова, педагогика ĕçĕн ветеранĕ. Хĕрарăмсен канашĕнче ĕçлесе вăл хĕрарăмсене пĕрлехи ĕçе явăçтарать. 2019 çулта ăна «Парти умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орденпа наградăланă. М.П. Павлова, Г.С. Соловьева, Карачура организацийĕн секретарĕ, райком бюровĕн членĕ Г.А. Антонова, Çĕньял уйрăмĕн секретарĕ, çав вăхăтрах «Вăрçă ачисем» район организацийĕн председателĕнче тăрăшакан В.К. Верендеева, Сĕктер уйрăмĕн секретарĕ Л.В. Зайцева, райцентрти З.С. Петровская, Сарапакасси уйрăмĕнчи Н.Г. Григорьева мĕн пур мероприятие хутшăнаççĕ.

Парти райкомĕ депутат пулма кандидатсене палăртасси 2020 çулхи тĕп тĕллев тесе шухăшлать. Районта – район Пухăвне депутатсене суйламалли 21 округ тата ял тăрăхĕн депутачĕсене суйламалли 188 округ. Пур çĕрте те КПРФăн тивĕçлĕ представителĕсем кирлĕ.

**С. Петров.**

*<u>Сăн ӳкерчĕкре:</u> КПРФ Шупашкар райкомĕн бюровĕн ларăвĕ пырать.*

Пĕлни усăллă

# Ялти хăш специалистсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тăкакĕсемшĕн компенсаци параççĕ?

Çурт-йĕршĕн, коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн /электричествăпа, ăшăпа, çак шутра кăмакапа хутса ăшăтакансене хытă топливăпа тивĕçтернĕшĕн/ тата нумай хваттерлĕ çуртсенчи пĕрлехи пурлăхăн капиталлă юсавĕшĕн тӳлесе пулакан тăкаксене саплаштарма уйăхсерен 1055 тенкĕ памалли граждансен категорийĕсен списокне Чăваш Республикин 2005 çулхи нарăсăн 8-мĕшĕнчи 1-мĕш саккунĕпе палăртнă.

Вĕсем ялсенче, рабочи поселоксенче /хула евĕрлĕ поселоксенче/ ĕçлесе пурăнакан:

– Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин учрежденийĕсенче аслă тата вăтам ветеринари профессийĕн пĕлĕвĕ кирлĕ должноçсенче ĕçлекенсем;

– Чăваш Республикин патшалăх ĕç тăвакан влаç органĕсене пăхăнса тăракан медицина организацийĕсен, Чăваш Республикин патшалăх вĕрентӳ организацийĕсен тата муниципалитет вĕрентӳ организацийĕсен педагогика ĕçченĕсем тата библиотекарĕсем;

– Чăваш Республикин патшалăх ĕç тăвакан влаç органĕсене пăхăнса тăракан медицина организацийĕсен, Чăваш Республикин патшалăх вĕрентӳ организацийĕсен тата муниципалитет вĕрентӳ организацийĕсен медицина ĕçченĕсем /аслă профессиллĕ /медицинăпа çыхăнман/ специалистсем тата кĕçĕн медицина персоналĕсĕр пуçне/ тата фармацевтика ĕçченĕсем /кĕçĕн фармацевтика персоналĕсĕр пуçне/;

– Чăваш Республикин социаллă пулăшу организацийĕсенчи социаллă тата педагогика ĕçченĕсем;

– Чăваш Енри патшалăх тата муниципалитетсенчи культура организацийĕсенчи культура, искусство, кинематографи ĕçченĕсем, рабочи профессийĕсемпе ĕçлекенсемсĕр пуçне.

Çӳлерех асăннă ушкăнри граждансен, çак ирĕкпе вĕсем 2016 çулхи кăрлачăн 31-мĕшĕччен усă курма пуçланă, çӳлерех асăннă организацисенче 10 çултан кая мар ĕçленĕ, çав организацисенче ĕçленĕ вăхăтра пенсие тухнă пулсан тата ялта пурăнсан 1055 тенкĕлĕх компенсаци упранса юлать.

## Ял хĕрарăмĕсен сахалрах ĕçлеме юрать

Патшалăх пуçлăхĕ ялта ĕçлекен хĕрарăмсене сахалрах ĕçлеме ирĕк паракан саккуна алă пусрĕ. Документ хальхи вăхăтра вăйра тăракан уйăхра пĕр хутчен ĕç укçине сыхласа хăвармасăр хушма пĕр кану кунĕ парассипе /ĕçченĕн заявленине тĕпе хурса/ танах ĕç вăхăтне чакармалли – эрнере 36 сехетрен ытла мар тата тулли ĕç кунĕпе ĕçленĕ чухнехи шалăва сыхласа хăварма – ирĕк пуррине çирĕплетет. Кунсăр пуçне ĕç условийĕсене кура ĕç кунне пайласа ĕçлекен хĕрарăмсен ĕç укçине ӳстерсе тӳлеме ирĕк параççĕ.

## АНЕКДОТ

– Вăт эсир, «единоросс» депутатсем, Америкăран эмелсем илсе килме чарасси пирки саккун кăлартăр. Халăх пирки шухăшлатăр-и? Спискра 1900 ят!

– Пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать.

– Çапах та сасартăк хăвăр чирлесе ӳксен, кирлĕ эмеле тупаймасан мĕн тăватăр?

– Ачасем самолетпа ярса парĕç.

– Ăçтан?

– Америкăран. Вĕсем унта пурăнаççĕ вĕт.

ЧĂНЛĂХ
Учредитель – «Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ

Тĕп редактор Васильев М.А.

Хаçата Çыхăну сфери, информаци технологийĕсем тата массăллă коммуникацисем енĕпе ĕçлекен федераллă служба Чăваш Республикинчи управленийĕнче регистрациленĕ.

Регистраци свидетельстви ПИ №ТУ 21-00407, 2016 çулхи июлĕн 18-мĕшĕ

Хаçатра илсе кăтартнă фактсемпе пĕлтерӳсемшĕн авторсем яваплă. Ал çырăвĕсемпе ытти материалсене регистрацилемеççĕ, авторсене тавăрса памаççĕ.

Материалсене илсе пичетленĕ чух пирĕн хаçат ятне асăнмалла.

Редакци тата издатель адресĕ: 428013, Шупашкар хули, Мир просп., 82 А çурт, тел.: 8(8352) 28-99-91 e-mail: kprfpress@bk.ru

Хаçата «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. Адресĕ: Шупашкар хули, И.Я.Яковлев просп., 13-мĕш çурт.

Тираж 5000 экз. Заказ №3778. Хаçат тӳлевсĕр саланать.